# Çĕнтерӳ ялавĕ

Муркаш район хаçачĕ

1944 çулхи майăн 5-мĕшĕнчепе тухать

92-93 (7623-7624) №№ * Шăмат кун, 2008 çулхи ноябрĕн (чӳк) 22-мĕшĕ * Хакĕ ирĕклĕ


**Ноябрĕн 21-мĕшĕ – Налук органĕсенче ĕçлекенсен кунĕ**



***Полина Геннадьевна Чекаловапа Ольга Витальевна Никитина – Раççей Федерацийĕн Чăваш Республики тăрăх районсем хушшинчи 6-мĕш номерлĕ инспекцийĕн патшалăх налук инспекторĕсем. Иккĕшĕ те çак ĕçре 1990 çултанпах тăрăшаççĕ. Полина Геннадьевна тăтăшах Етĕрне, Муркаш тата Хĕрлĕ Чутай районĕсенчи предприятисемпе организацисенче налук тĕрĕслевĕсемпе пулать. Ольга Витальевна алли витĕр вара налук декларацийĕсемпе отчетсем тухаççĕ. Инспекторсем хăйсен ĕçне тивĕçлипех пурнăçлаççĕ, ыйтусемпе пыракансене кирлĕ пулăшу параççĕ.***

Н. НИКОЛАЕВА
сăн ӳкерчĕкĕ.

**Пĕрлехи информаци кунĕнчен**

# Йывăрлăхсем тĕл пулаççĕ çав...

Иртнĕ юн кун республикăра пĕрлехи информаци кунĕ пулса иртрĕ. Çавна май пирĕн района Чăваш Республикин Экономика аталанăвĕн тата суту-илӳ министерствин суту-илӳ, потребительсен рынокĕн тата пулăшусем паракан сферăн секторĕн ертӳçи И.С. Иванова, Чăваш Республикин Физкультурăпа спорт тата туризм министерствин сывлăха çирĕплетмелли ĕçе йĕркелессипе ĕçлекен тата туризм пайĕн ертӳçи В.В. Лысова, «Чувашэнерго» акционерсен уçă обществин генеральнăй директорĕн çумĕ М.Г. Гусев, Чăваш Республикинчи Федераллă казначейство управленийĕн ертӳçин çумĕ С.В. Кудряшов килчĕç.

«Чувашэнерго» акционерсен уçă обществин генеральнăй директорĕн çумĕ М.Г. Гусев район администрацийĕн пуçлăхĕн çумĕпе, капиталлă строительство, архитектура тата пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăх управленийĕн ертӳçипе В.Г. Никитинпа чи малтанах Кашмашри çĕнĕ урамра пулчĕ. Ку вăл чи малтан электричество кĕртмелли урамсенчен пĕри. Владимир Германович каланă тăрăх, кун пек çĕнĕ урамсем районĕпе 30. Район вăйĕпе çĕнĕ урамсене электричество кĕртме кансĕр. Ку тĕлĕшпе республика пулăшăвĕ кирлине палăртрĕ вăл. Çулсем тăвассипе уйрăм программа пулнă пек ятарлă программа пулсан ку йывăр лава çитес çĕре çитерме çăмăлтарах пулĕ.

Унтан ку информаци ушкăнне кĕрекенсем «Чувашэнерго» акционерсен уçă обществин Çурçĕрти электричество сечĕсен Муркашри филиалĕнче пулчĕç. Кунти лару-тăрупа паллашрĕç. Унăн ертӳçи В.В. Егоров каланă тăрăх, электричество сечĕсен вăрăмăшĕпе ку филиал республикăра чи малти. Валерий Владимирович коллектив ĕçĕ-хĕлĕпе, малашнехи плансемпе паллаштарчĕ. Çавăн пекех пысăк парăмсем пулнипе çитес вăхăтра районти 6 ял хуçалăх предприятийĕн администрацине электричество пама пăрахассине пĕлтерчĕ.

Информаци ушкăнĕ «Муркашри кирпĕч завочĕ» акционерсен уçă обществин ĕçĕ-хĕлĕпе те тĕплĕн паллашрĕ. Асăннă коллектив кăçалхи 10 уйăхра 12 миллион та 245 пин штук кирпĕч туса кăларнă. Çак хушăра 80647,0 пин тенкĕлĕх сутнă туса илнĕ продукцие. Ку вăл, пĕлтĕрхи çак вăхăтрипе танлаштарсан, 78,2 процент нумайрах. Палăртмалла, асăннă предприяти районта социаллă пĕлтерĕшлĕ предприяти шутланать. Кунта паянхи кун 170 çын ĕçлет. Вăтам ĕç укçи 14,5 пин тенкĕпе танлашать. Уйрăм специальноçпе ĕçлекенсен вăл тата пысăк. Бульдозеристсен ĕç укçи çулла 35 пин тенкĕ те пулнă. Кăçал иртнĕ çулхи ĕç пĕтĕмлетĕвĕсемпе 13-мĕш тата 14-мĕш ĕç укçине те илнĕ кунта ĕçлекенсем.

Тĕнчери кризис завода та пырса тĕкĕнмесĕр иртмерĕ. Иртнĕ çулсенче завод кăларакан пахалăхлă продукцие Мускавран та, Хусантан та, ытти çĕртен те туяннă пулсан, халĕ кирпĕче ытларах хамăр республикăра туянаççĕ. Çул укçи хăпарса кайнăран аякран килсе кирпĕч туянакансен йышĕ чакнăран паян завод пĕр кăмакине ĕçлеме чарнă.

–Ăна чарман пулсан кăçал октябрьте 700 пин штук мар, 1 миллион та 300 пин туса кăларнă пулăттăмăр. Çулталăкне 14 миллион та 800 пин штук туса кăларма пулатчĕ. Халĕ 13 миллион та 800 пин штук кирпĕч туса кăларнипе çырлахма тивет кăçал, – паллаштарать коллектив ĕçĕ-хĕлĕпе унăн ертӳçин çумĕ Ю.И. Петров.

Мĕн пур майĕпе перекет йĕркипе ĕçлеме тăрăшаççĕ кунта. Кĕçех çĕнĕ лини хута каймалла. Çакна валли оборудование малтан юрăхсăра тухнăскертен хăйсемех юсаса ĕçлемелле тунă. Шутласан, 5 миллион тенкĕ тăрать вăл. Çакăн чухлĕ сумма перекетлеме пултарнă специалистсем пултаруллă пулнипе.

Ĕç дисциплини вара кунта çирĕп. Эрехпе туслашсан ĕç вырăнĕ çухаласса лайăх пĕлеççĕ. Тăрăшуллă ĕçшĕн администраци ĕç укçине тивĕçлипех тӳленине те ăнланса илмелĕх пулнă ĕнтĕ вăхăт. Юрий Петрович вара хăй 14 çул хушшинче 14 кун та канса курман пуль. Ĕçлеме чарăннă завода çĕнĕрен ĕçлеттерме пуçласа, çакнашкал ӳсĕмсем тума çăмăлах мар пулĕ. 8 единица техника туянчĕç кăçал. Кирпĕч пахалăхĕ пирки вара Ю.И. Петров пĕрре те иккĕленмест.

Ытти информаци ушкăнĕсем вара районти ытти ĕç коллективĕсен ĕçĕ-хĕлĕпе паллашрĕç. Тĕл пулусенче РФ Президенчĕ Д.А. Медведев РФ Федераллă Пухăвне янă Çыруран тухса тăракан задачăсем, граждансене социаллă пулăшу парассин мелĕсем çинче чарăнчĕç. Çавăн пекех Чăваш Республикин Президенчĕн Н.В. Федоровăн «Чăваш Республикинче ялсене автомобиль çулĕсене туса пĕтересси çинчен калакан мерăсем» Указĕ мĕнле пурнăçланнине тишкерчĕç, çĕрпе çыхăннă ыйтусене пăхса тухрĕç.

**Л.ПАВЛОВА.**

**Хушу**

# Черетсĕр 29-мĕш лару

Депутатсен районти Пухăвĕн председателĕн 2008 çулхи ноябрĕн 20-мĕшĕнчи 30 № йышăнăвĕпе килĕшӳллĕн депутатсен районти Пухăвĕн черетсĕр 29-мĕш ларăвне 2008 çулхи ноябрĕн 27-мĕшĕнче район администрацийĕн ларусен залĕнче 10 сехетре пухма палăртнă.

Ларура пăхса тухма кун йĕркине çак ыйтусене кĕртме сĕннĕ:

1. Пурăнмалли çурт-йĕре тытса тăнăшăн тата юсанăшăн 2009 çулта тӳлемелли виçесене палăртасси çинчен.
2. Çĕр участокĕсене арендăна памалли йĕркене тата Чăваш Республикинчи Муркаш районĕн вырăнти бюджечĕн тупăшлăхне тӳрлетӳсем кĕртекен коэффициента çирĕплетесси çинчен.
3. Пĕчĕк тата вăтам предпринимательство субъекчĕсене, пĕчĕк тата вăтам предпринимательство структурисене йĕркелекен организацисене нумай вăхăтлăх усă курма Муркаш районĕн муниципаллă пурлăхне çăмăллатнă аренда тӳлевĕн ставкипе памалли перечене çирĕплетесси çинчен.
4. Бюджетсем хушшинчи трансфертсемпе тивĕçтерессин расчечĕн методикине çирĕплетесси çинчен.
5. Депутатсен Муркаш район Пухăвĕн 2007 çулхи октябрĕн 25-мĕшĕнчи С-21/6 № «Раççей Федерацийĕн тата Чăваш Республикин налуксемпе тӳлевсем çинчен калакан законодательствисемпе килĕшӳллĕн вырăнти самоуправлени органĕсене шаннă налук йĕркелĕвĕн ыйтăвĕсем çинчен» Положенине çирĕплетесси çинчен» йышăнăвне улшăнусемпе хушăмсем кĕртесси çинчен.
6. Депутатсен Муркаш район Пухăвĕн 2002 çулхи апрелĕн 19-мĕшĕнчи С-8/5 № «Чăваш Республикинчи Муркаш районĕн муниципаллă харпăрлăхĕнчи пурăнмалли мар çурт-йĕрне арендăна памалли йĕрке çинчен» йышăнăвне улшăнусем кĕртесси çинчен.

Кунпа пĕрлех ял тăрăхĕсен администрацийĕсен полномочийĕсен хăш-пĕр пайĕсене пурнăçлама йышăнасси пирки те ыйтусем пăхса тухма палăртнă.

Ларăва ял тăрăхĕсен пуçлăхĕсене, район администрацийĕн управленийĕсемпе пайĕсен пуçлăхĕсене, депутатсен районти Пухăвĕ çумĕнчи çамрăксен парламенчĕн представителĕсене те чĕнеççĕ.

## Муркаш районĕнчи ял тăрăхĕсен 2009 çулхи бюджечĕсен проекчĕсене халăхпа сӳтсе явмалли график

| Ял тăрăхĕсем | Тĕл пулу вырăнĕ | Тĕл пулу кунĕ | Тĕл пулу вăхăчĕ |
|---|---|---|---|
| Турай | Турайри Культура çурчĕ | Ноябрĕн 28-мĕшĕ | 11 сех. |
| Ильинка | Тренккăри Культура çурчĕ | Ноябрĕн 28-мĕшĕ | 13 сех. |
| Чуманкасси | Чапаев яч. хис. хуçалăхăн ларусен залĕ | Ноябрĕн 28-мĕшĕ | 14 сех. |
| Ярославка | Ярославкăри Культура çурчĕ | Ноябрĕн 28-мĕшĕ | 14 сех. |
| Мăн Сĕнтĕр | Мăн Сĕнтĕрти Культура çурчĕ | Ноябрĕн 28-мĕшĕ | 18 сех. |
| Хорнуй | Ленин яч. хис. хуçалăхăн ларусен залĕ | Ноябрĕн 29-мĕшĕ | 11 сех. |
| Юнкă | Юнкăри Культура çурчĕ | Ноябрĕн 29-мĕшĕ | 13 сех. |
| Çатракасси | Кашмашри Культура çурчĕ | Ноябрĕн 29-мĕшĕ | 14 сех. |
| Йӳçкасси | Йӳçкассинчи Культура çурчĕ | Ноябрĕн 29-мĕшĕ | 14 сех. |
| Москакасси | Москакассинчи Культура çурчĕ | Ноябрĕн 29-мĕшĕ | 18 сех. |
| Катькас | «Моргаушская» чăх-чĕп фабрикин ларусен залĕ | Декабрĕн 1-мĕшĕ | 12 сех. |
| Оринин | «Оринино» хуçалăхăн ларусен залĕ | Декабрĕн 1-мĕшĕ | 15 сех. |
| Шетмĕпуç | Шетмĕпуçĕнчи Культура çурчĕ | Декабрĕн 1-мĕшĕ | 14 сех. |
| Ярапайкасси | Ярапайкассинчи Культура çурчĕ | Декабрĕн 1-мĕшĕ | 14 сех. |
| Уйкас Янасал | Васкассинчи Культура çурчĕ | Декабрĕн 2-мĕшĕ | 14 сех. |
| Муркаш | Муркашри муниципаллă Культура çурчĕ | Декабрĕн 2-мĕшĕ | 15 сех. |

**Юбилей**

## *Саламлатпăр*

Мы поздравляем от души нашу **Елену Назаровну ГРАЧЕВУ** с 45 летием и дарим ей этот стишок.



Прошло уже 45 лет
Как совершилось чудо.
Появилась ты на белый свет
Неведомо откуда.
Бывает только в жизни раз
Подобное явление,
Мы от души хотим ее
Поздравить с днем рождения.

**С поздравлением жильцы Б-Сундырского дома ветеранов и сотрудники.**

---

Юратнăран та юратнă çыннăмăра, аннене, асаннене, кукамая – Юнкă ялĕнче пурăнакан **Елизавета Прокопьевна НИКИФОРОВАНА** 70 çул тултарнă ятпа чун-чĕререн саламлатпăр. Çирĕп сывлăх, вăрăм кун-çул сунатпăр. Тайма пуç сана пуриншĕн те.

**Саламлаканĕсем: хĕрĕсемпе ывăлĕ, кĕрĕвĕсемпе кинĕ, мăнукĕсем.**

Юратнă мăшăра, аттене, асаттене – Ивановка ялĕнче пурăнакан **Григорий Германович ТИМОФЕЕВА** сумлă юбилей – 60 çул тултарнă ятпа чун-чĕререн тухакан чи ăшă сăмахсемпе саламлатпăр, мĕн пур ыррине кăна сунатпăр. Вăрăм кун-çул, тулли телей, çирĕп сывлăх пултăр. Эс пурришĕн савăнатпăр, санпа хамăра телейлĕ туятпăр. Тайма пуç сана пуриншĕн те.

**Саламлаканĕсем: мăшăрĕ, ывăлĕсем, хĕрĕ, кĕрӳшĕ, кинĕсем, мăнукĕсем, çывăх тăванĕсем, тăхлачисемпе хăтисем.**

---



Хуракасси Выççăлкки ялĕнче пурăнакан **Николай Петрович ПЕТРОВСКИЕ** çуралнăранпа 70 çул çитнĕ ятпа чун-чĕререн саламлатпăр. Санăн ытарайми ырă кăмăлна хуçакан тĕслĕхсем пĕрре те ан пулччăр. Хуйхă-суйхă, чир-чĕр санран айккинчен пăрăнса иртчĕр. Çемьере телей çăлтăрĕ йăлтйăл кулса тăтăр. Ăнăçу пурнăç çулне уçса пытăр. Ĕмĕрӳ çирĕп сывлăхлă, телейлĕ, вăрăм пултăр. Эпир çумра çакăн пек юлташ пулнишĕн çав тери савăнатпăр.

**Саламлаканĕсем: мăшăрĕ, ывăлĕсем, хĕрĕсем, тăванĕсем, пускилсем, ял-йыш.**

**Çырăнтару – 2009**

## Çитес çур çул валли çырăнтараççĕ

**Районти «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçата 2009 çулхи пĕрремĕш çур çулта илсе тăма çырăнтараççĕ. Ултă уйăха çырăнса илмелли хак – 191 тенкĕ 70 пус.**

**Хаклă вулаканăм, район хыпарçисĕр ан юлăр. Çитес çул та пĕрле пулар!**

**Райхаçат редакцийĕ.**